# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНĔ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КОНСТИТУЦИЙĔН 71 ТАТА 74 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин Конституцине (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2000, 38 №; 2003, 53 №; 2004, 60 №; 2005, 63 №; 2006, 71 №; 2010, 85 №; 2011, 91 №; 2012, 95 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 7 №-сем; 2014, 6 №; 2016, 4 №; "Республика" хаçат, 2018, ака уйăхĕн 4-мĕшĕ; 2021, çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕ; 2022, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 71 статьян 2-мĕш пункчĕн иккĕмĕш абзацĕнче "тупа тăватăп." сăмахсене "тупа тăватăп"." сăмахсемпе улăштарас;

2) 74 статьяра:

а) пĕрремĕш пая çакăн пек çырса 8.1-мĕш пункт хушса хурас:

"8.1) ют çĕршыв агенчĕн статусне илсен;";

ă) иккĕмĕш пайăн иккĕмĕш абзацĕнче "2-мĕш, 3-мĕш, 8-мĕш тата 9-мĕш пункчĕсемпе" сăмахсене "2-мĕш, 3-мĕш, 8-мĕш, 8.1-мĕш тата 9-мĕш пункчĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕ
40 №